# «ЧĂВАШ СĂМАХĔСЕН КĔНЕКИНЧЕ» МĔН-МĔН ПУР?

*Статья авторĕ, филологи ăслăлăхĕсен докторĕ Михаил Иванович Скворцов чăваш словарĕсем хатĕрлес, лексикографин иртнĕ кун-çулне тата теорипе меслетлĕх ыйтăвĕсене тĕпчес енĕпе чылайран ĕçлет. Н.И.Ашмарин словарĕ çинчен тĕрлĕ тĕпчевçĕ нумай çырнă, унăн пĕлтерĕшне, паха енĕсене тивĕçлĕ хак панă. Çавăнпа та статья авторĕ словарĕн пĕр пайăр енне - Ашмарин унта мĕнле-мĕнле чĕлхе единицисене кĕртнине, вĕсен тӳпипе шайлашăвне тĕпчесе палăртас тĕллев лартать.*

Н.И.Ашмарин словарĕ çав тери пуяннине кашни вулакан пĕлет. Анчах мĕн чухлĕ-ха унта пайăррăн уйрăм сăмах, сăмах майлашăвĕ, пуплерĕш? Мĕн чухлĕ сăвă сыпăкĕ, тупмалли юмах, ваттисен сăмахĕ тата ытти чĕлхе единици? Тĕпчевçĕсене çакă яланах кăсăклантарнă. Акă, А.И.Иванов, словарь кăларас ĕçе тӳррĕнех хутшăннăскер, «çывхартуллă» мелпе шутласа, словарьте 40 пине яхăн сăмах тата сăмахсен тĕрлĕ вариантчĕсем 5-6 пин пулнине палăртнă. Паллă педагог-тĕпчевçĕ Г.Н.Волков шутланă тăрăх, словарьти сăмах йышĕ 50 пине капашать. Унсăр пуçне словарьти сăмахсене ăнлантарма, вĕсен пĕлтерĕшне çирĕплетсе пама, пуплеври вырăнне уçăмлатма Ашмарин 20 пине яхăн юрă сыпăкĕпе, 10 пине яхăн ваттисен сăмахĕпе тата тĕрлĕ йышши каларăшпа, çавна майлах сутмалли юмахпа тата юмах-халап сыпăкĕпе усă курать; унта пинрен кая мар йăла-мешехене, уява çырса кăтартнă. Анчах ку хисепсем пурте - пĕтĕмĕшле, чуххăмрах шутласа кăларнисем. Словарь материалне ятарласа тишкерсен вара çакă курăнать.

Н.И.Ашмарин хăйĕн словарьне «тезаурус» - «пуянлăх» тенĕ. Ку сăмах ахальтен килмен ун асне. Унпа автор чăваш чĕлхин пур тĕрлĕ сăмахĕсене, вĕсен пĕлтерĕшпе тытăм уйрăмлăхĕсене çырса кăтартас тĕллеве палăртнă. Сăмахсем тата ытти шайри единициăсем вара чĕлхере питĕ нумай. Илер-ха, акă, пайăр ятсемпе пайăр мар ятсене.

Н.И.Ашмарин тезаурусĕн принципĕ ку тĕлĕшпе уçăмлă: вăл пайăр мар ятсемпе пайăр ятсем хушшинче нимĕнле уйрăмлăх та тумасть, пурне те тĕплĕн çырса кăтартать /паллах, материал пур таран/. Словарьти пайăр ятсен тĕп ушкăнĕсем çаксем:

1.Антропонимсем, тĕпрен илсен, чăвашсен тĕне кĕричченхи тапхăртан сыхланса юлнă авалхи ячĕсем. В.К.Магницкий хăйĕн чăваш çын ячĕсен словарĕнче арçын ячĕсене çеç пухса пичетленĕ пулсан, Ашмарин словарĕнче хĕрарăм ячĕсем те йышлă. Несĕлĕ тĕлĕшĕнчен вĕсем пĕрешкел мар, тĕп тĕрĕк тата чăн чăваш ячĕсемпе пĕрлех кунта араб-перс, тутар ячĕсем нумай. Кунсăр пуçне автор словаре чăвашланнă вырăс ячĕсен тĕрлĕрен варианчĕсене те кĕртнĕ. Ятсене /уйрăмах словарĕн малтанхи кăларăмĕсенче/ материал пурçемĕн ăнлантарса панă. Акă хăш-пĕр тĕслĕхсем: Айук «личное имя женщины», Айука «личное имя мужчины, заимствовано из монг. /калм./», Аймет «личное имя мужчины», имя татарина, ср. марийск. мужское имя Аймэт /Марла календарь, 1909/, Айньук «имя татарина», Айтулă «личное языческое имя мужчины - от араб. Абдулла или от тат. ай «луна» и тулы «полный»?, Айпăлат название рода в с. Б.Карачкине Козм.у. т.ыт.те.

2. Топонимсем - ялсен, шывсен ячĕсем тата микротопонимсем - тĕрлĕрен вак обьектсен ячĕсем. Ăнлантару принципĕ кунта та çавнашкалах: объект ăçта вырнаçнине, унăн ячĕ мĕнле пулса кайнине, унпа çыхăннă легендăсене çырса кăтартнă. Тĕслĕхсем: Айкăрлă çырми «овраг около с. Лесных Кошек, где, по рассказам, некогда жили разбойники», Авански кĕлли «киреметь Аванского», Анат-йал «название селения Вырыстайкино, Сенгилеевской волости и уезда», «село Нижнее Аверкино Бугурусланского уезда», Чакăл «название леса около с Чув. Кулатка бывшего Хвалынского уезда», «название поля», Чиклĕ шор «название оврага около д. Хирбоси /Вурнарск. р./», Чул йупа çавраки «название луга: там «тутар вилли вырăнĕ»; чулне вырăнтан хăпартсан, пăр çапса каять пусса, йала тĕрлĕ инкек-синкер пулать, тетчĕç ватă çынсем, çынна тĕрлĕрен чирсем йерет, тетчĕç».

3. Пайăр ятсен ытти хăш-пĕр пысăк мар ушкăнĕсем. Çăлтăр ячĕсем: Ала çăлтăр «Плеяды», Алтăр Çăлтăр «созвездие Большой Медведицы», Ёлкер «Плеяды», Тимĕр шалçа çăлтăр «Полярная звезда». Мифологи, фольклор сăнарĕсен, уявсен ячĕсем: Митес, Иван-Митес «герой сказки», Украк-Маçтăр «имя героя сказки /Украсть Мастер/» , Управçă «название божества», Микул турă, Микол торă «название божества», Мăн ырлăх «название духа», Пукрав «название праздника Покров». Выльăх ячĕсем: Полкашка «кличка собаки», Кампур / из кам «кто» + пур «есть»/ «кличка собаки», Карапай «кличка лошади /или название породы лошадей/»; Мерккульски «пароход бывшего общества «Кавказ и Меркурий», Макарав, Макару, Макарйа т.ыт.те. «Макарьевская ярмарка», Капкăн «название юмористического журнала», Касхыр «название колхоза в Ибресинском районе» т.ыт.те.

Сăмах йышне /ăна словник, реестр теççĕ/ йĕркелессипе çыхăннă тепĕр пысăк ыйту - ăна чĕлхе единицисен пĕр-пĕр паллă шайĕнче тытса пырасси. Пĕтĕмĕшпе илсен, словарь реестрĕнче çакăн пек единицăсем пулма пултараççĕ: саспаллисем /фонетика-графика шайĕ/, морфемăсем /морфологи шайĕ/, сăмахсем /лексика шайĕ/, сăмах майлашăвĕсем /синтаксис шайĕ, ку вăл фразеологи тата терминологи словарĕсенче, çавăн пекех сăмах çыхăнаслăхне кăтартакан ятарлă словарьсенче пулма пултарать/, уйрăм предложенисем, фразăсем /синтаксис шайĕ, ку вăл афористика е пареми словарĕсенче пулма пултарать, унта ваттисен сăмахĕсемпе каларăшсене, çунатлă сăмахсене пăхса тухаççĕ/, предложенисен ушкăнĕсем /текст шайĕ, ку мелпе цитатăсен словарĕсенче усă кураççĕ/.

Ашмарин çак единицăсенчен сăмахсене, вĕсен майлашăвĕсене тата сăмах пайĕсене, вăл шутра аффикс морфемăсене çырса кăтартнă. Çапла ĕнтĕ унăн тезаурусне лексика словарĕ /е сăмах словарĕ/ тесе çеç хак пани тĕрĕсех мар пулнă пулĕччĕ; ку вăл - лексика-фразеологи тата грамматика словарĕ. Лексика единицисен мĕнле


Проф. Н. И. АШМАРИН
Чăваш сăмахĕсен кĕнеки
THESAURUS
LINGUAE TSCHUVASCHORUM
Liber I
MDCCCCXXVIII
СЛОВАРЬ
ЧУВАШСКОГО ЯЗЫКА
Выпуск I
А.
КАЗАНЬ
1928

ушкăнĕсене реестра кĕртни çинчен çӳлерех каларăмăр ĕнтĕ. Сăмахсен пĕрлешĕвĕсене илес пулсан вара, вĕсене семантика пĕрлĕхне, функцине тата çыхăнăвне кура ушкăнлама пулать.

Чи малтан кунта ăнлавсене, япаласене анлăн ят паракан, пĕлтерĕш тĕлĕшĕнчен пĕр сăмахпа танлашакан пĕрлешӳсене, çавăн пекех анлă глагол формисене кĕртмелле. Япала ячĕ функциллисем пайăр мар лексикăра та, пайăр ятсен ушкăнĕнче те пĕр пекех тĕл пулаççĕ. Халăх чĕлхинче хăй халлĕн йĕркеленнĕ терминологире анлă ятсемпе усă курасси сарăлнă. Çакна ĕç хатĕрĕсен ячĕсенче те, йывăç-курăк , кайăк-кĕшĕк ячĕсенче те, топонимире те курма пулать. Акă, авăн «овин» терминпа çыхăннă анлă ятсенче словарь реестрне çаксене кĕртнĕ: кашкăр авăнĕ «волчья яма» /куçăмлă пĕлтерĕшпе усă курнă/, авăн алтанĕ «петух, которого режут по окончании молотьбы», авăн уйăхĕ /статьяра уйăх сăмаха пăхма


СЛОВАРЬ
ЧУВАШСКОГО
ЯЗЫКА
ЧĂВАШ
СĂМАХĔСЕН
КĔНЕКИ
ТОМ
7
К(КУРАКЛА–КШША)

